# «Intelпа вĕренетпĕр»

**Калайкассинчи вăтам пĕлӳ паракан шкул вĕрентӳ хутлăхĕнчи ҫĕнĕлĕхсем хыҫҫăн сăнасах тăрать, усăллă пулма пултарнисене пурнăҫа кĕртме тăрăшать.**

Акă «Intelпа вĕренетпĕр» проект ҫинчен пĕлтернĕ хыҫҫăнах шкул унпа ĕҫлеме шут тытрĕ. Ҫак программăна Intel компанийĕн специалисчĕсем йĕркелесе янă. Эпĕ информатика преподавателĕ пулнă май ҫак проекта кăмăлласах йышăнтăм пулин те, ун чухне вăл ҫав тери интереслĕ пулнине тĕшмĕртме те пултарайман.

Пĕлтĕр вĕрентӳ институтĕнче пире валли ятарлă курссем уҫрĕҫ. Вĕсене Новосибирск хулинчи информаци технологийĕсен областьри центрĕ пуҫарнă, тренинг евĕр ирттернĕ.

«Intelпа вĕренетпĕр» программăн «Технологи тата вырăнти сообщество» курсĕ вĕренекенсен критика шухăшлавне аталантарма пулăшать, информацие хăв тĕллĕн шырама хистет, вырăнти сообществăн проблемисене яр уҫҫăн курма вĕрентет. Пирĕн ҫур ҫул вĕреннин пĕтĕмлетĕвĕ проектсене хӳтĕлесси пулчĕ. Вĕренекенсем темăсене хăйсем тĕллĕн суйларĕҫ. Ачасем 5 темăпа проект хатĕрлерĕҫ:

— Чурикассипе Коракакасси ялĕ хушшинче кану паркне уҫасси;

— Кораккаси ялĕнче тем те пĕр курса ҫӳрени;

— шкул тата ун тавралăхĕ тăрăх кану йĕркелени;

— тавралăха сыхлани;

— Яраккасси ялĕнчи пурнăҫа улăштарма мĕн ҫитмест.

Вĕренекенсем проектсене тимлесе хатĕрлерĕҫ. Вĕсен кашнин ĕҫĕ индивидуаллă, хăйне еврĕрлĕ пулчĕ. Ĕҫсемпе презентаци ирттерчĕҫ, ун хыҫҫăн алла сертификат илчĕҫ.

Сертификата Intel Foundation фонд президенчĕ Брэнд Муссили, Раҫҫейри тата Никама пăхăнман патшалăхсен пĕрлĕхĕн вĕрентӳ программисен директорĕ Вера Баклашова тата «Intelпа вĕренетпĕр» программăна вĕрентекен алă пуснă.

Ҫак уйăхран «Intelпа вĕренетпĕр» программăн «Професси тата эпир» курсне вĕренĕпĕр. «Хыҫалти парта» хаҫат ăна тимлесех тăрĕ.

**Татьяна Ершова,
Калайкасси шкулĕнче информатика вĕрентекенĕ**

# ЭПИР АСТĂВАТПĂР

Кăҫал нарăсăн 17-мĕшĕнче Афганистанран Совет Ҫарĕн чаҫĕсене кăларнăранпа 18 ҫул. Патшалăхра ҫак куна «Раҫҫейри интернационалист-салтаксене аса илмелли кун» тесе палăртнă. Чăваш Республикинчен Афганистана 5 пин салтак кайнă. 117-шĕ каялла таврăнман. 60 ҫын ытла инвалид пулса тăнă. Муркаш районĕнчен ҫав вăрҫа 114 яхăн ҫамрăк хутшăннă, 7-шĕ ĕмĕрлĕхех куҫĕсене хупнă.

Катькас ял тăрăхĕнчен Афган вăрҫине ҫаксем хутшăннă:

1. Белов Анатолий Иванович
2. Егоров Сергей Иванович
3. Зайцев Михаил Витальевич
4. Зубков Михаил Гордеевич
5. Колесников Геннадий Ардольонович
6. Моисеев Николай Гурьевич
7. Олаев Вячеслав Александрович
8. Портнов Владимир Яковлевич
9. Скворцов Сергей Михайлович
10. Смирнов Анатолий Николаевич
11. Сылгачев Николай Витальевич
12. Трофимов Юрий Михайлович
13. Фомин Владимир Александрович
14. Щукин Аполлон Абросимович

1997 ҫултанпах Калайкасси шкулĕн музейĕ ҫумĕнче патриотизм Канашĕ ĕҫлет. Ҫак ĕҫе йĕркелесе пыраканĕсем Е.Е. Ерагинпа М.С.Скворцов. Асăннă Канаш ĕҫĕнче Ҫĕлеменкасси ялĕнче пурăнакан Сергей Дмитриевич Кошкин уйрăмах тăрăшуллă: хăй аллипе ҫар хĕҫ-пăшалĕсен макечĕсене ăсталаса шкул музейне пуянлатрĕ.

2004 ҫулхи нарăсăн 21-мĕшĕнче Калайкасси вăтам шкулĕнче воин-афганецсен иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче общество ертӳҫи пулма Вячеслав Евсеевич Киршева суйланă, ертӳҫĕн ҫумне «Герой» хуҫалăхри сысна фермин заведующине Валентин Троицкие, общество членĕсем пулма: Андреев ячĕпе хисепленекен хуҫалăхра ĕҫлекен Валерий Максимова, Мăн Сĕнтĕр больницинчи Юрий Трофимов врача, Суворов ячĕпе хисепленекен хуҫалăхри ĕҫ сыхланăвĕн инженерне Иван Васильева шанчĕҫ. Ҫавăнпа пĕрлех Афганистанра службăра тăман, анчах ҫав вăрҫăра хутшăннисене пĕр йыша пуҫтарассипе тимлекен Евгений Евстафьевич Ерагина та /вăл Калайкасси вăтам шкул учителĕ/ ҫак общество Канашне йышăннă.

**Юрий Осипов, 7 класс, Калайкасси шкулĕ**

# ХĂНАРА ЧĂВАШ ТЕЛЕВИДЕНИЙĔ



**«Хыҫалти парта» хаҫат номертен номере интереслĕрен те интереслĕрех пулса пырать.**

Акă, хаҫатăн 4-мĕш номерĕ Чăваш телевиденийĕнче ĕҫлекен Арсений Тарасов паллă журналистăн аллине те лекрĕ. Вăл «Хыҫалти парта» хаҫат Чăваш Республикишĕн чăн-чăн сенсаци терĕ, нарăсăн 2-мĕшĕнче репортаж ӳкерме Калайкасси шкулне пырса ҫитрĕ.

Шкул ачисем ăна хапăлласах кĕтсе илчĕҫ. Ҫамрăк журналистсем те хăйсене ҫӳллĕ шайра кăтартрĕҫ. «Хыҫалти парта» ҫинчен Чăваш телевидениййĕ нарăсăн 6-мĕшĕнче хыпарсен кăларăмĕнче паллаштарчĕ. Аслă классем валли «Чӳрече умĕнче» передачăра уйрăм сюжет пулĕ.

Эпир Арсений Тарасов журналистран хамăр та интервью илтĕмĕр. Ăна хаҫатăн 10-мĕш страницинче вулама пултаратăр.

# ПАТРИОТЛА ЮРĂСЕН ФЕСТИВАЛĔ

**1989-мĕш ҫулхи нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче Совет ҫарĕсене Афганистанран кăларнă. Афганистанра ҫапăҫнă, вăрҫă хирĕнче пуҫĕсене хунă салтаксене чыслаcа Калайкасси шкулĕнче патриотла юрăсен фестивалĕ иртрĕ.**

Вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем хăйсен пултарулăхне туллин кăтартма пултарчĕҫ. Малтан сцена ҫине «Моя любимая» юрăпа 11С класс тухрĕ, спорт енĕпе анчах мар, ытти енсемпе те маттурине палăртрĕ. 11-мĕш педагогика класĕ «Огонек» юрра юрласа кăна мар, инсценировкăласа та пачĕ. 10 С-ра вĕренекенсем вара юрă шăрантарнипе анчах ҫырлахмарĕҫ, ташăпа та савăнтарчĕҫ. 9-мĕш класри ачасем хăйсен «Я убит под Бамутом» юррипе куракансен чĕрисене хумхатрĕҫ, 8А-сем те питĕ хĕрӳллĕ туйăмпа «Облака» юрăна янратрĕҫ. 11А, 8Б, 10П классем вара хаваслă юрăсене суйласа илнĕ. Вĕсене итленĕ май ачасемпе вĕрентекенсен пичĕсем ҫинче ҫутă кулă вылярĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, хальхи ҫамрăксем мирлĕ пурнăҫшăн пулни ҫĕре кĕнĕ салтаксене хисеплени, чыслани питĕ савăнтарать.

**ЛарисаОСИПОВА,
11П класс, Калайкасси шкулĕ**